Пурнӑҫа, ҫӗршыва юрат, тӑван халӑх мӗнпе чӗрӗ, ҫавна юрат!

# ТУСЛӐХ

НУРЛАТ РАЙОНӖН ОБЩЕСТВӐПА ПОЛИТИКА ХАҪАЧӖ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаҫат 1931 ҫулхи июлӗн 9-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ.* | 102 N (4671) | *1998 ҫулхи сентябрь (авӑн) уйӑхӗн 9-мӗшӗ, юнкун* | *Палӑртнӑ хакпа.*

## КИРЛӖ ЗАДАЧӐСЕМ ПӐХСА ТУХНӐ

Сыснасем ӗрчетессине анлӑлатни мӗнле пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулни ҫинчен тепӗр хут каламалла та мар пулӗ. Анчах та ҫакӑн пек пысӑк тупӑшлӑ отрасле пур ҫӗрте те ҫителӗклӗ тимлӗх уйӑрмаҫҫӗ. Халь акӑ, хӗлле сысна йышне тулли рационпа тивӗҫтерес тесен, хутӑш силос хумалли лайӑх вӑхӑт.

Ҫавӑнпа та шӑматкун хуҫалӑхсен тӗп инженерӗсем, зоотехникӗсем, ветеринари врачӗсем хутшӑннӑ семинар-канашлура калаҫу ҫак отрасле тивекен ыйтусем ҫинчен пычӗ. Унта хутшӑннисем "Надежда" агрофирмӑн Пӗчӗк Хӑмӑшлӑри тата Муса Джалиль ячӗпе хисепленекен хуҫалӑхри сысна фермисенче тӑкаксене хирӗҫле механизм мӗнле ӗҫлемелли йӗркепе паллашрӗҫ, ҫав вӑхӑтрах пӗрремӗш хуҫалӑхра мӑйракаллӑ шултра выльӑха кӑкармасӑр усранине тата сӑвакан зал ӗҫне курчӗҫ, иккӗмӗшӗнче - сӑвакан ӗнесене лагерьсенче мӗнле пӑхнине. Вӗсем кукурузӑпа люцернӑна тӑтӑшах илсе килсе тӑнипе рацион кунта пуян пулнине палӑртрӗҫ.

РСУн хушма хуҫалӑхӗн сысна ферминче реконструкци ирттернӗ хыҫҫӑн тислӗк кӑлармалли механизмсемсӗрех ӗҫлеме май пурри тимлӗхе тивӗҫлӗ. Кунта хутӑш силос хурассине те технологие ҫирӗп пӑхӑнса пурнӑҫлаҫҫӗ. Семинарӑн теори пайӗнче, ҫак хуҫалӑхра иртнӗскерте, районти ял хуҫалӑх управленийӗн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен пай начальникӗ А.И.Ухваньков отрасле аталантармалли шӑп ҫак аспектсем ҫинче чарӑнса тӑчӗ, ҫаплах сыснасене пӑхмалли, апатлантармалли технологие ҫирӗп пӑхӑнмаллине те темиҫе хутчен палӑртрӗ. Семинарта тухса калаҫнӑ администраци пуҫлӑхӗн пӗрремӗш ҫумӗсем - Ю.В.Терентьевпа ял хуҫалӑхпа апат-ҫимӗҫ управленийӗн начальникӗ Ф.М.Давлетшин выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри 8 уйӑхри итогсене тишкерсе тухнӑ хыҫҫӑн отрасле ҫӗнетмелли ҫитес ҫывӑх вӑхӑтри задачӑсене палӑртрӗҫ, хӗле хатӗрленес, выльӑхсене фермӑсене куҫарас ыйтусем ҫинче чарӑнса тӑчӗҫ.

## Тӑрӑшуллӑскер

*Нумаях пулмасть Назир Зайнуллинӑн иккӗмӗш ывӑл ҫуралнӑ, ӑна Нияз ят панӑ.*

*- Трактор ҫӳретме вӗрентӗп, ӑна ялтан ниҫта та ямастӑп тет ашшӗ, - тесе кулать "Тан" кооператив ертӳҫи Васыл Сунгатуллин.*

*Назир ачисене тӑван ҫӗр ҫинче ӗҫлеттересшӗн, хӑйӗн профессийӗн вӑрттӑнлӑхӗсене вӗрентесшӗн ӗмӗтленет. Механизатор ӗҫне тӳрех суйласа илмен пулин те, ӑна вӑл кӑмӑлланӑ. Малтан, хӑйӗн ашшӗ-амӑшӗ пекех, выльӑх-чӗрлӗх пӑхнӑ ҫӗрте вӑй хунӑ. Ашшӗпе амӑшӗ, Закир пиччепе Назия аппа пенси ҫулне ҫитнине пӑхмасӑр, халӗ те ҫак отрасльте вӑй хураҫҫӗ-ха, ывӑлне вара техника кӑсӑклантарнӑ. Назир малтан комбайнера пулӑшакан пулса ӗҫленӗ, кайран трактор юсама пулӑшнӑ, юсаса пӗтернӗ хыҫҫӑн вара ӑна унта ӗҫлеме сӗннӗ. Механизатор профессине алла илме ӑна кооператив ертӳҫи Васыл Сунгатуллин пулӑшнӑ. Хальхи вӑхӑтра Зайнуллин техника ытти механизаторсем пекех пӗлет. Акӑ икӗ ҫул ӗнтӗ вӑл КСК-100 комбайнпа выльӑх-чӗрлӗх валли апат хатӗрленӗ ҫӗре хутшӑнать. Ҫуркунне вӑл 150 гектар ҫине кукуруза акнӑ, халь ҫак ана хӑйӗн тухӑҫӗпе савӑнтарать, кайран вара костер акнӑ. Август уйӑхӗ пуҫлансан, Назира чи яваплӑ участоксенчен пӗрне шанса панӑ. Ҫамрӑк механизатор кӗрхи культурӑсене 400 гектара яхӑн акнӑ. Ака ӗҫӗсене вӑл технологипе килӗшӳллӗн, удобренисем кӗртсе пурнӑҫланӑ. Кӑҫал ыраш ытларах акса хӑварма шутланӑ, "Эстафета Татарстана" супер-элита класлӑ вӑрлӑхпа усӑ курнӑ. Кӗрхи культурӑсене акса пӗтернӗ хыҫҫӑн, Назир хӑйӗн тракторӗ ҫумне КС-2,6 агрегат ҫаклатса каллех кукуруза хирне тухнӑ. Халь кунта силос хываҫҫӗ. Симӗс масса питӗ лайӑх, кукуруза пуҫӗ те ӗлкӗрнӗ. "Тан" ӗҫченӗсем 30-40 гектар ҫинчи кукурузӑна тырӑлӑх пухса илме шутлаҫҫӗ. Халь, ялта ӗҫ нумай вӑхӑтра, Назира ывӑл ҫуралнине те паллӑ тума тӳр килмен - ӗҫ кӗтмест. Часах чӗкӗнтӗр те кӑларма вӑхӑт ҫитет, тен вӑл "БМ-6" комбайнпа ӗҫлӗ. Кӗскен каласан, вӑл ӗҫрен хӑраканни мар. Ҫӗр вара шӑп кӑна ҫакӑн пеккисемпе тытӑнса тӑрать.*

*С.НУРУЛЛИНА.*



*Н.АЗИЗОВ ӳкерчӗкӗнче: Н.Зайнуллин.*

## Тырҫи паттӑрӗсем

Хресченсен хуҫалӑхӗсен "Тан" ассоциацийӗнчи **Вагиз ГАЙФУЛЛИН** ДТ-75 тракторпа ҫӗртме сухаланӑ ҫӗрте нормӑна 2,5-3 хут пурнӑҫласа, 400 гектар ытла ҫӗр ӗҫлесе хатӗрленӗ.

* * *

"Киклӗ" хуҫалӑхри **Вазых ХАМИТОВ** КамАЗ машинӑпа хиртен йӗтем ҫине 9 пин центнер ытла тырӑ турттарнӑ.

* * *

"Тӗрнеҫ" ассоциацири **Вячеслав ХРИСТОФОРОВ** К-700 тракторпа ҫӗртме сухаланӑ ҫӗрте 2,5-шер норма пурнӑҫлать, пурӗ вӑл 460 гектар ҫӗр сухаланӑ.

* * *

Мичурин ячӗпе хисепленекен хуҫалӑхри **Валерий НОВИКОВ** тӑпра сӳреленӗ ҫӗрте икӗ норма пурнӑҫлать.

## "Тухӑҫ-98" пресс-центр пӗлтерет

Хальхи вӑхӑт тӗлне районта ҫурхи культурӑсенчен тулӑпа сӗлле пурӗ 6 пин гектара яхӑн лаптӑк ҫинчен ҫапса илмелли юлнӑ. Участоксенчен чылайӑшӗнчи тырӑ вӑрлӑхлӑх пулни ҫинчен те манмалла мар. Хуҫалӑхсенчен чылайӑшӗ тырпул пухса кӗртес ӗҫсене вӗҫленӗ ӗнтӗ. Анчах та "Черемшан", "Алга", "Татарстан", "Комбайн" ассоциацисенче, ҫаплах "Лесная Поляна" тата нефтебазӑн хушма хуҫалӑхӗсенче ӗҫ питӗ нумай-ха. "Киклӗ" тата Синдряков яч.хис. хуҫалӑхсенче ҫурхи туллӑн тухӑҫӗ чи пысӑкки. Вӗсенчен кашнинче ӑна 1000-шер тонна пухса илнӗ. Вӗсенче ҫак культурӑн тухӑҫӗ пӗр пекрех. Мичурин яч.хис. хуҫалӑхра тулӑ тухӑҫӗ пуян пулнӑ, ӑна 1000 тонна яхӑн пухса илнӗ. "Рассвет", Синдряков яч.хис. тата Хафизов яч.хис. хуҫалӑхсем вара кӑҫал сӗлӗ тухӑҫӗпе мухтанма пултараҫҫӗ. Юлашки пӑрҫа тухӑҫӗпе тата ӑна пухса илессипе те мала тухнӑ.

Ҫак кунсенче, кӗрхи ака вӗҫленнӗ вӑхӑтра, ҫӗртме тӑвассине те пысӑк тимлӗх уйӑрмалла. Ӗнерхи кун тӗлне ҫак ӗҫе 23 пин гектар ытла лаптӑк ҫинче пурнӑҫланӑ. "Заря", "Дуслык", Мичурин яч.хис., "Родина", "Сӗнче" хуҫалӑхсем плана 60-66 процент пурнӑҫланӑ. Кузнецов яч.хис., "Черемшан" ассоциацисенче вара кӗрхи ҫӗртме тумалли мӗнпур лаптӑксен пӗрре пиллӗкмӗш пайне кӑна ӗҫлесе хатӗрленӗ, сахӑр завочӗн, нефтебазӑн хушма хуҫалӑхӗсенче, "Чулпан" тата "Комбайн" ассоциацисенче - пӗрре виҫҫӗмӗш пайне. Выльӑх апачӗ хатӗрлессине илсен вара, хальхи вӑхӑтра кукурузӑна ҫулассине хӑвӑртлатмалла. "Алгара", нефтебазӑн хушма хуҫалӑхӗнче силоса валли ҫулса илнӗ теме те пулать, кунта пӗр условнӑй выльӑх пуҫне 20 центнер ытла апат единици хатӗрленӗ. "Татарстан", Хафизов яч.хис., Мичурин яч.хис., Кузнецов яч.хис., "Киклӗ" хуҫалӑхсенче кукуруза нумай, пуҫтарманни те кунта чылай-ха. "Агрохимсервис", сахӑр завочӗн хушма хуҫалӑхӗсенче, "Черемшан", "Комбайн" ассоциацисенче те ӑна нумаях ҫулман. Вӗсенчен пӗрремӗшӗнче пӗр условнӑй выльӑх пуҫне хатӗрленӗ апат единици 37 центнер шутланать.

## Ҫуркунне мӗн акӑпӑр?

**Цифрӑсен пӗрремӗш графи - тӗп тата страховкӑллӑ фонда пӗрчӗллӗ ҫурхи культурӑсен вӑрлӑхне хывнӑ (центнерпа), иккӗмӗшӗ - планпа палӑртнине 1998 ҫулхи сентябрӗн 7-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫланӑ (процентпа).**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| "Сӗнче" | 2650 | 98 | "Нефтебазӑн" х/х | 1655 | 37 |
| "Илюткино" х/х | 1970 | 98 | Кузнецов яч.хис. | 1840 | 36 |
| "Игенче" | 2949 | 78 | "Заветы Ильича" | 1060 | 36 |
| "Дуслык" | 1328 | 78 | Хафизов яч.хис. | 1617 | 27 |
| "Рассвет" | 4001 | 77 | "Кондурча" | 950 | 25 |
| "Тӗрнеҫ" | 3000 | 68 | "Чулпан" | 740 | 24 |
| РСУ х/х | 2460 | 66 | Синдряков яч.хис. | 2137 | 23 |
| "Комбайн" | 3000 | 61 | "Агрохимсервис" х/х | 1070 | 22 |
| "Тан" | 1400 | 58 | "Черемшан" | 880 | 21 |
| Мичурин яч.хис. | 2960 | 52 | Сахӑр завочӗн х/х | 537 | 15 |
| "Урняк" | 2259 | 52 | "Киклӗ" | 990 | 13 |
| "Лесная Поляна" | 530 | 49 | "Алга" | 735 | 9 |
| М.Джалиль яч.хис. | 920 | 42 | "Татарстан" | 410 | 4 |
| "Заря" | 1000 | 41 | | | |
| "Родина" | 844 | 40 | **Район тӑрӑх** | **45892** | **38** |

Кӗрхи культурӑсене планпа палӑртнинчен сахалрах акнӑ пулин те, вӑл пӗлтӗрхинчен чылай нумайрах. Апла пулсан ҫитес ҫул акмалли чылай лаптӑка ҫурхи культурӑсем валли уйӑрӗҫ. Ҫавӑнпа та хальхи вӑхӑтри чи кирлӗ ӗҫсенчен пӗри ҫурхи культурӑсен вӑрлӑхне хывасси шутланать. Уй-хирти ытти ӗҫсем те васкатаҫҫӗ-ха ӗнтӗ, ҫапах вӗсенчен хӑшне-пӗрне тытӑнма вӑхӑт ҫитнӗ кӑна, вӑрлӑх хывассине вара кая хӑварма юрамасть, кунта кашни сехет хаклӑ. Шел, анчах та хуҫалӑхсенчен нумайӑшӗ лайӑх вӑхӑтпа усӑ курмаҫҫӗ, ҫакӑн результачӗсем вара куҫ умӗнчех. Акмалли материала пур ҫӗрте те кирлӗ кондицие ҫитермен, хальхи йывӑр вӑхӑтра вара вӑрлӑха ытларах хывни пӑсмӗччӗ. Вӑрлӑха пӗр-пӗринпе улӑштарас ӗҫе те ҫуркуннене хӑвармалла мар: ку е тепӗр культурӑн лайӑх тухӑҫне илнӗ хуҫалӑхсен вӗсене упрама хуриччен ыттисемпе улӑштармалла.

## *Пирӗн лашасем Хусанта та чи лайӑххисем*

Республика кунне халалланӑ ятпа Хусанта иртнӗ лашасен ӑмӑртӑвӗнче пирӗн урхамахсем хӑйсен йӑрӑлӑхне кӑтартнӑ. Президентӑн юратнӑ Ледокӗ тата администраци пуҫлӑхӗн Альби (юланутҫи Р.Цабов) таса ӑратлӑ лашасем хушшинче кӑҫал та пӗрремӗш результат кӑтартнӑ.

## Сентябрь уйӑхӗнчи сывлӑхшӑн начар кунсемпе сехетсем

Сентябрӗн 13-мӗшӗнче 17 сехетрен пуҫласа 19 сехетчен, 15-мӗшӗнче 16 сехетрен пуҫласа 18 сехетчен, 20-мӗшӗнче 18 сехетрен пуҫласа 20 сехетчен, 27-мӗшӗнче 3 сехетрен пуҫласа 5 сехетчен, 28-мӗшӗнче 17 сехетрен пуҫласа 19 сехетчен.

Пирĕн интервью

# "Ак-барс" шантарать

***Чистай филиалĕн Нурлатри "Ак-барс" Банк хушма офисĕ пирĕн районти банксенчен чи çамрăкки. Тен, чылайăшĕ вăл ĕçлени çинчен пĕлмеççĕ те пулĕ. Шăп кăна çак тĕллевпе - районта пурăнакансене çĕнĕ банк тата унăн услугисем çинчен ăнлантарса парас тесе калаçрăмăр эпир унăн ертÿçипе Р.Г.БИЛАЛОВПА.***

**Кĕске справка**

**Акционерлă коммерци банкĕ "Ак-барс" Банка Раççей Федерацийĕн Тĕп Банкĕнче 1993 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче регистрациленĕ. Банкăн Тутарстан тата Раççей Федерацийĕн территорийĕнче 11 филиалĕ тата 36 представительстви пур. Банк филиалĕсен сечĕ ялан ÿсет. 1994 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнчеппе "Ак-барс" Банк Тутарстан Республикин Правительствин инвестици программисене аталантармалли уполномоченный банкĕ шутланать, 1996 çулхи июлĕн 15-мĕшĕнчеппе - ТР Правительство векселĕсене çаврăнăша яракан уполномоченный банк. Банкăн корреспондент сетĕнче 40 ытла банк-партнер.**

**Банк рейтингĕ çулсерен ÿсет. Раççей рейтингĕсен юлашки даннăйĕсем тăрăх банка Раççейри чи динамикăллă аталанакан банксен шутне кĕртнĕ, капитализаци шайĕпе тата тупăшлăхпа банк Раççейри малта пыракан 50 банк хушшинче 1 тата 5-мĕш вырăн йышăнать. 1997 çулта Раççейри чи шанчăклă 10 банк шутне кĕнĕ пулсан, кăçал вăл Раççейри чи пысăк пилĕк банк шутне кĕчĕ.**

- Пирĕн районта "Ак-барс" Банк представительствине 1994 çулхи июнь уйăхĕнче уçнăччĕ. Унăн тĕп ĕçĕ юридически тата физически çынсем хушшинчи чекпа вексель çаврăнăшне тивĕçтерессиччĕ. Кăçалхи март уйăхĕнчен "Ак-барс" Банк Правленийĕн решенийĕпе юридически тата физически çынсене банк услугисем парассине анлăлатас тĕллевпе представительстăран Чистай филиалĕн хушма офисĕ йĕркелерĕ.

***- Çапла майпа, халь эсир хăвăрăн клиентăрсене мĕнле услугăсем паратăр?***

- Халь эпир халăх, предприятисемпе организацисем укçа хурассин операцине, çаплах юридически тата физически çынсен расчет-касса тивĕçтерĕвне пурнăçлатпăр. 13 тĕрлĕ вкладпа пирĕн патра чи пысăк процент ставки - çулталăкне вăл 40 процента çитет. Унсăр пуçне, июлĕн 15-мĕшĕнчен валютăпа ĕçлеме тытăнчĕ: валюта улăштармалли пункт уçрăмăр, çакă пире США долларĕсене, нимĕççен маркине сутма-илме, ют çĕршывсен валюта вкладчĕсемпе ĕçлеме май парать. Банк паракан услугăсен шутне çаплах апат-çимĕç чекĕсемпе жетонсен çаврăнăшне тивĕçтерессии тата коммуналлă тÿлевсене йышăнасси кĕрет. Уйăхсерен эпир апат-çимĕç чекĕсене 750 пин тата 110 пин жетон паратпăр.

***- Сирĕн банк услугисемпе миçе вкладчик усă курать?***

- Хальхи вăхăт тĕлне халăхран 2,0 миллион ытла тенкĕ йышăннă, ку цифра вара чакмасть, ÿсет кăна.

***- Çынсем мĕншĕн сирĕн банкăра суйласа илни çинчен эсир мĕн шутлатăр? Районта ыттисем те пур вĕт - СБС-Агро, "Девон-Кредит".***

- Эпĕ вĕсене шанчăксăр тесе калаймастăп, вĕсен те клиентсем сахал мар пулĕ. Вкладчиксен шанăçĕ темиçе фактортан килет пулĕ. Пĕрремĕшĕнчен, динамикăллă аталанакан банк, ку вара пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Иккĕмĕшĕнчен, ку правительствăн уполномоченнăй банкĕ. Вăл вара, чи малтан, республика программисене аталантарассине тивĕçтерет. Клиентсем вĕсен вклачĕсем урăх регионсене мар (калăпăр, Раççейри), хăйсен республикăри программăсене кредитлама кайнине ăнланаççĕ. Республика интересĕсем - пирĕнпе сирĕн пурнăçа лайăхлатасси. Çак ĕçĕн мораль енĕ те ытăва пирĕн майлă татса парать. Вăл пирĕн республикăн Правительстви çине ĕçлет, вăл вара халăх умĕнчи хăйĕн тивĕçĕсене яланах пурнăçлать. Пирĕн банкăн шанчăклăхне çирĕплетекен тепĕр аргумента илсе кăтартас килет: валюта операцийĕсене тата хаклă хутсене пурнăçлас тĕлĕшпе Правительство умĕнчи тивĕççем пысăках мар, çавăнпа та доллар курсĕ улшăнни, хаклă хутсен хакĕсем чакни пирĕншĕн хăрушă мар. Шăп çакна клиентсене ăнлантарма тиврĕ, вĕсем вара юлашки кунсенче доллар курсĕ ÿснипе хускалнă хĕвĕшĕве пула хăйсен укçине илме çул тытнăччĕ. Пирĕн клиентсен пĕр çăмăллăхĕ пур, вĕсен пăшăрханмалла мар: кăмăл пулсан хăйсен укçине вĕсем ялан тата пĕр чăрмавсăр илме пултараççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн яланах "чĕрĕ" укça пур. Калани çумне тата çакна хушасшăн: çак кунсенче республикăри виçĕ банк - "Ак-барç", "Атăл-Кама" ("Волжско-Камский") тата "Татфондбанк" йывăр финанс лару-тăрăвĕнчен тухма хăйсен вăйне пĕрлештерме йышăннă. Вĕсем пĕр-пĕрне кредитсемпе пулăшма, экономика хăрушсăрлăхне пĕрле хÿтĕлеме, çаплах хăйсен укçине шаннă вкладчиксем умĕнчи тивĕçĕсене пурнăçлама шутлаççĕ. Çаксем пурте вĕсене хăйсен сăн-сăпатне, шанчăклăхне сыхласа хăварма пулăшĕç. Çаплах "Ак-барс" йăлана кĕнĕ пархатарлă акцисене хутшăннине палăртас килет. Икĕ çул хушши ĕнтĕ Пĕлÿсен кунне вăл пĕрремĕш класа каякансене парнесем парать: кăçал районти 700 ачана яхăн "Туссем" кĕнеке илнĕ.

***- Рашит Габдрахманович, хушма офисăн малашлăхĕ пур-и?***

- Шăп çакăн çинчен каласшăн та. Хальхи вăхăтра хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕн Ф.С.Сибагатуллинăн пуçарăвĕпе офисран филиал тăвас ĕç малалла пырать. Ун чухне майсем те, районa усă та пиртен ытларах пулĕ. Унăн малашлăхĕ çинчен каласан, банка усă акционерлă общество тăвасси çинчен решени йышăннă. Унтан акцисем тухĕç, вĕсене Раççейри тата пĕтĕм тĕнчери фонд рынокĕсенче вырнаçтарăпăр. Çакă банксен хушма малашлăхне уçать.

***- Эсир промстройбанк çуртĕнче вырнаçнă. Ку енĕпе халăх йăнăш ăнланмасть-и?***

- Тĕрĕс, "Ак-барс" Банкăн хăйĕн çурчĕ çук, çавăнпа та тĕп офис пире валли Татпромстройбанкăн Нурлатри уйрăмĕн çуртне тÿлесе илчĕ. Эсир ăнланатăр пулĕ ĕнтĕ, эпир пĕр-пĕринпе çыхăнман, çавăнпа та ĕлĕкхи хуçасене тивекен ыйтусене татса пама пултараймастпăр. Халь юсав ĕçĕсем пыраççĕ, анчах çакă клиентсене тивĕçтерессинче палăрмĕ. Кăмăл пулсан, тархасшăн, пырăр. Хальхи вăхăтра укçана банкра упрани шанчăклă пулнине ăнлантарни ытлашши пулĕ.

**С.ХАЙРУЛЛИНА**
**калаçнă.**



*Çĕр ĕçченне тырçи тапхăрĕнче тутлă, сĕтеклĕ апат питĕ кирлĕ. Ун пек чухне кăмăл та çĕкленет, ĕç те кал-кал пырать. Хресченсен хуçалăхĕсен "Чулпан" ассоциацийĕнче кун çинчен нихăçан та манмаççĕ. Çавăнпа та Рушания Нуруллина хăйне пулăшакан Светлана Веденинапа тухăç пуçтаракансене вĕри апатпа вăхăтлă тивĕçтерес тесе тăрăшаççĕ.*

*Н.Азизов сăнÿкерчĕкĕ.*

## Пирĕн шефсем

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ, апла пулсан, педагогсен ĕç те ÿсрĕ. Пирĕн пысăк микрорайонти ачасене вĕрентесси çеç мар, çаплах хуçалăхри ыйтусене те татса памалла, ачасене вĕри апатпа, кĕнекесемпе тата ытти материалсемпе тивĕçтерессишĕн тăрăшмалла, ăшă, çутă ыйтăвĕсене татса памалла. Хальхи финансенчен йывăр вăхăтра, витре, шăпăр, пăта та туянма май çук чухне, шкулăн камран пулăшу ыйтмалла? Юрать-ха, пирĕн шефсем пур.

Ку - нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управлени. Вĕсем пулман пулсан, шкулти пысăк юсав ĕçĕсене те пурнăçлайман пулăттăмăр. Теплицăна тĕпрен юсама вĕсем пире цемент, пăрăхсем уйăрса пачĕç. ЦКРЗС пире чÿрече блокĕсемпе, сăрăсемпе тивĕçтерчĕ, УТТ автоĕç кабинетне оборудованилеме автомобиль узелĕсемпе агрегатсем пачĕ. Эстетика ушкăнĕ те пире питĕ нумай пулăшрĕ. СМЦ, УПРП, БПО та пире пулăшма хирĕçлемерĕç. Шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулĕ тĕлне хатĕрлес тĕлĕшпе пĕлтернĕ районти смотр-конкурсра эпир иккĕмĕш вырăн йышăннинче, паллах ĕнтĕ, пирĕн шефсен тÿпи те пур.

Пире пулăшнăшăн эпир управлени начальникне М.М.Хузина, цехсен ертÿçисене И.Г.Валиуллина, Ш.Г.Ягудина, Н.В.Мустафина, Г.И.Шайхутдинова, И.М.Фахрутдинова, А.А.Соболькова, НГДУ начальникĕн çумне Д.Н.Валеева, профсоюз комитечĕн председательне О.Н.Лизунова тата нефтяниксене пурне те тав тăватпăр, вĕсене çирĕп сывлăх, тулли вăй-хăват сунатпăр. Эпир вара хуçалăхри тĕрлĕ отрасльсенче ăнăçлă ĕçлеме пултаракан тивĕçлĕ ăру ÿстерме тăрăшăпăр.

**Р.ГИНЯЕВА,**
**хулари 4-мĕш номерлĕ вăтам шкул директорĕ.**

Шкул хыпарĕсем

## Пĕлÿ кунĕ

Хуралтăвĕнчи вăтам шкулта Пĕлÿ кунĕ йăлана кĕнĕ пĕрлехи линейкăран пуçланчĕ. Шкул директорĕ Л.И.Арбузова тата А.И.Кузнецов ячĕпе хисепленекен кооператив председателĕ М.З.Фахрутдинов саламлă сăмахсемпе тухса калаçрĕç, çуллахи каникул вăхăтĕнче ĕçленĕ ачасене хаклă парнесем пачĕç. Шкулти вĕренÿ пайĕн заведующийĕ Г.А.Игнатьева пĕлтĕрхи вĕренÿ çулĕн итогĕсене пĕтĕмлетрĕ тата вĕренÿ çулне "5" паллăсемпе пĕтернĕ ачасене палăртрĕ.

Ачасем уява пуçтарăннисене импровизациленĕ концертпа савăнтарчĕç, шкул çинчен сăвăсем каларĕç, юрăсем шăрантарчĕç.

Кунăн тĕп геройĕсем, паллах, лара-тăра пĕлмен пĕрремĕш класра вăренекенсемччĕ.Çак çутă та хаклă кун, пĕрремĕш учебник, урок çинчен, ачасене пĕлÿсен асамлă та ăнланма çук тĕнчипе паллаштаракан пĕрремĕш учительница çинчен аса илÿсем пурнăçĕ тăршшĕпе манăçмĕç.

Ырă çул пултăр.

**Т.ГРАФ,**
**ДЮЦ методисчĕ.**

## Хăнасен парнисем

Пĕлÿ кунĕн уявĕнче шоферсем - Нурлатри автотранспорт предприятийĕн представителĕсем хутшăннипе праçник тата чаплăрах пулчĕ. Темиçе çул хушши ĕнтĕ вĕсем Çĕнĕ Элметри вăтам шкула ачасем патне уява килеççĕ. Кăçал предприяти директорĕ И.М.Валиев пĕрремĕш класри 24 ачана кашнине парне пачĕ: вĕренÿ хатĕрĕсемпе портфель тата 50-шар тенкĕ укçа. Ачасем мĕнле савăннине курсанчĕ эсир! Хресченсен хуçалăхĕсен "Татарстан" ассоциацийĕн председателĕ А.Г.Саматов çуллахи вăхăтра хуçалăха активлă пулăшнă вĕренекенсене асăнмалăх парнесем пачĕ.

*** Ял çĕнетӳ çул-йĕрĕпе**

# Тăвата кооперативăн виçĕ историйĕ

## “ЭПИР ЫТТИСЕНЧЕН МĔНРЕН КАЯ?”

Уйăх маларах ку кооперативра председатель улшăнчĕ. “Ертӳçĕ çемçерех пулнипе, пирĕн халиччен те хамăрăн расчет счечĕ çук”, - теççĕ кунта. Петровскипе Сосновка поселокĕсенче пурăнакансем пурне те МСО ĕçченĕсем çине шанса, хăйсем ĕçлесшĕнех пулман пулас. Анчах та кайран, кӳршисем тăрăшса, çине тăрса ĕçленине курсан, вĕсен те ĕçе активлатма тӳр килнĕ. Ертӳçĕ пулма Анатолий Ефимова суйланă, çапла майпа кунта уйăх-уйăх çурă каярах çĕнĕлле пурăнма тытăннă. Петровскипе Сосновка поселокĕсенчен тăракан кооператив сенаж, силос хывма туслă тытăннă, выльăх апачĕ те чылай хатĕрленĕ - хĕл валли çителĕклĕ. 300-350 гектар çине кĕрхи культурăсем акма шутланă, ку ĕçе вĕçленĕ ĕнтĕ.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи ĕçсем те сисĕнмелле лайăхлана пуçланă. Фермăсене юсамалли çинчен сăмах пуçарсанах, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем ку ĕçе хăйсем çине илнĕ: аяккинчен çынсем кирлĕ мар, хамăрах юсатпăр, тенĕ вĕсем. Çапла тунă та. Виççĕшĕ ферма картине тунă, алăксемпе урайсене, рамăсене юсанă вăхăтра пĕри черетпе кĕтӳ кĕтнĕ.

Часах ертӳçĕ патне Сосновкăран делегаци килнĕ.

- Пирĕн те юсамалла. Мĕн халиччен тăсатпăр?

Паллах ĕнтĕ, Анатолий кăмăлпах килĕшнĕ.

Кооператив хăйĕн пĕрремĕш утăмĕсене акă çапла тăвать. Ертӳçĕн пуçĕнче плансем нумай: расчет счечĕ уçмалла, çынсене те йывăр ларутăрура хăварас марччĕ, çăмăл машина туянасчĕ, ĕçе те, ытти çĕре те Анатолие халлĕхе çула май каякан машинăсемпе çитме тӳр килет вĕт. Çынсем ĕçшĕн çунни ăна тăрăшарах, хавхаланулларах вăй хума пулăшать. Акă мĕнле иккен вăл, кооператив.

* * *

Ялавăр кустĕнчен эпĕ хавхалануллă кăмăлтуйăмпа таврăнтăм. Тĕлпулусем, плансем, тавлашусем - çаксем пурте ялта çĕнĕ пурнăç тытăннине çирĕплетеççĕ. Кашнин шăпи хăйĕн аллинче пулнине пурте лайăх ăнланаççĕ. Чăнах та, тавлашуллă ыйтусем чылай пулнă. Сăмахран, хăйсен çĕр пайĕсене вĕсене панă ялти ĕçлемен çынсемпе кооперативăн мĕн тумалла?

Март уйăхĕнче калаçса таталнăччĕ ĕнтĕ, тĕрĕсрех, çакăн пек сĕнӳ панăччĕ, кĕркунне вĕсене аренда тӳлевĕ - 2-шер центнер тырă памаллаччĕ. Халĕ вара шухăшсем пĕр пек мар, ял çыннисен кампа канашламалла? Районта вĕсен кашни рецепнине юридици-енчен тĕрĕс ăнлантарса çирĕплеткен специалист пулнă пулсанччĕ, теççĕ вĕсем. Кашни çĕнĕ кун кооперативсен умне вун-вун ыйту кăларса тăратать, вĕсене татса пама “Агрохимсервис” ертӳçисем, çаплах йывăр ыйтусенчен хăтălма И.И. Мухамметзяновăн ăсталăхĕ пулăшаççĕ. Унсăрăн иртнĕ çулсенчех Димитровград хулинчен илсе килнĕ запас пайсемшĕн укçа пуçтарни ял çыннисене хăратнă пулĕччĕ-ха.

Çынсен ĕçлес кăмăл пулсан, хуллен ăсталăх та, опыт та пухăнĕ. Халлĕхе вара кооперативсен пĕрлешĕвĕ пурăнма, аталанма, хăйсен хыççăнхи ăру валли пысăк малашлăхлă çирĕп хуçалăх хăварма тăрăшать. Çакăн çинчен администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев та каларĕ:



Н.Азизовăн ӳкерчĕкĕнче: "Нива" кооператив комбайнерĕ Петр Михайлович Журавлев хăйне пулăшакан Михаил Ижуковпа пĕрле.

### “Петровский” кооператив

- Кăçал вĕсем пуян тухăç пухса илеймерĕç, анчах та кунта вĕсен айăпĕ кăна мар. Çынсем ĕçлес тесе тăрăшаççĕ. Хирти кĕрхи ĕçсене вĕсем туслă пурнăçлаççĕ. Район ертӳçисем çак ялсенчи ĕçе йĕркелес ыйту çине çапла пăхни тĕрĕс пулнине тепĕр хут ĕненчĕç. Суйласа илнĕ çул-йĕре никам та улăштарма шутламасть, кооперативсене ирĕклĕх панă, эпир вĕсене май пур таран пулăшма тăрăшăпăр, - терĕ Юрий Владимирович.

Ялавăр пысăк та историллĕ улшăнусем пулласса шанать. Эпир те кунта час-часах пулăпăр тесе шутлатпăр.

Апла пулсан вĕсене ырă çул сунатпăр.

С.ХАЙРУЛЛИНА.

# Пĕлӳ çăлкуçĕ. Усă курма ирĕк парса

***Çак вĕренӳ çулĕнче пирĕн ачасем хамăрăн тăван тавралăхăн географи учебникĕпе вĕренме тытăнма пултарĕç.***

*** Çынсем тата фактсем**

Унăн авторĕ - Татьяна Ивановна Чибидина, Нурлатри 3-мĕш номерлĕ шкулти географи учительници. Темиçе çул каярах вăл Хусан хулинче, канашлура Кукмор районĕнче кăларнă çавăн пек учебника курнă. Инçетрен, пĕр самант çеç - уçкаласа пăхма май килмен. Интересленсе кайнă: “Пирĕн ачасене çакăн пеккиччĕ - хамăрăн Нурлат таврашĕ кашнине çывăх вĕт...” Татьяна Ивановна хăйĕн шухăшне майĕпен пурнăçа кĕртме тытăннă. Çак ĕçе вăл икĕ çул халлланă, çĕнĕлĕхпе районти вĕрентӳ пайĕнче кăсăкланнă, çавăнпа та Татьяна Ивановна çу тăршшĕпе тăрăшнă. Шухăшланă. Специалистсенчен ыйтса пĕлнĕ, тĕрĕсленĕ. Тĕплĕн йĕркеленĕ. Çĕнĕ кĕнекере çакăн пек сыпăксем: “Географи вырăнĕ”, “Рельеф тата геологи тытăмĕ”, “Шыв ресурсĕсем”, “Тăпра”, “Ӳсентăран тата чĕрчунсен тĕнчи”, тепĕр икĕ сыпăкĕ Нурлат районĕн халăхĕ çинчен каласа парĕ. Кунта теори материалĕ кăна мар, практика заданийĕсемпе ыйтăвĕсем те пур, шыв, вăрман тата ытти рессурссене упрассипе çыхăннă экологи ыйтăвĕсене çĕкленĕ. Картограмма, фотоилюстраципе ӳкерчĕк нумай.

Районти тата хулари географи учителĕсен методика пĕрлешĕвĕн юлашки канашлăвĕнче - ăна Татьяна Ивановна ертсе пырать - пĕтĕмлетнĕ материала ĕçтешĕсем тимлĕн сӳтсе явнă. Хăшĕ-пĕри ăна хатĕрленĕ çĕре те хутшăннă ĕнтĕ. Тĕслĕхрен, Вăрман завочĕ (Çĕнĕ Тăмпа) шкулĕнчи учитель-методист Николай Михайлович Захаров климат çинчен заметкăсем пухнă, Ялавăр шкулĕнчи географ Сания Насыховна Нотфуллина пирĕн тавралăхри вăрман хуçалăхĕ çинчен тĕплĕн çырса хатĕрленĕ. Çак ĕç кирлĕ пуласса тата ăна професси шайĕпе килĕшӳллĕн пурнăçлани тĕлĕшпе иккĕленмелли çук. Чăнах та, консультантсене, кăларакана тупмалла, финанс ыйтăвĕсене татса памалла ĕнтĕ, анчах та пулас вĕренӳ пособийĕ вĕренекенсене те, вĕрентекенсене те питĕ кирлĕ.

Районта çакăн пек учебник пулнă пулсан вара Татьяна Ивановна Чибидина тата урăх япала шухăшласа кăларнă пулĕччĕ. Мĕншĕн тесен вăл питĕ ĕçчен. Пурнăçри хобби унăн çакăн пек. Çакна шутласа кăларса е хитрелетсе çырман - вăл чылай вăхăтне ĕçе халалланă, вăл урăхла пулма пултараймасть. Шкула, педучилищĕпе Хусанти университета пиллĕк паллăсемпе пĕтернĕ, унта вăл этнографи ыйтăвĕсемпе чăнласах интересленнĕ. Запорожьери чи лайăх шкулта, чапа тухнă вăтăр иккĕмĕшĕнче ĕçленĕ, юлашки çичĕ çул хушши вара сахăр вĕретекенсен тата строительсен ачисене географи предметне вĕрентет. Хăйĕн предметне питĕ юратать. Татьяна Ивановнан вĕренекенĕсем олимпиадăсемпе конкурссене ăнăçлă хутшăнаççĕ, вĕсем географи факультетне суйласа илсен вăл питĕ савăнать. Тĕслĕхрен, Денис Баранков пек.

Пилĕк çул каялла вăл “Россиянка” кружок йĕркеленĕ, унта ачасем кăмăлпах юрлаççĕ, ташлаççĕ, такмаксем хываççĕ, концертсем хатĕрлеççĕ, çак опыта пĕтĕмлетнĕ илемлĕ альбомсемпе видеоçыравсен содержанине вара специалистсем пысăк хак панă, вĕренекенсене хушма пĕлӳ парассин автор программин конкурсĕнче Татьяна Ивановна çĕнтернĕ. Ĕçе “Атăл тăрăхĕнче пурăнакан халăхсен йăли-йĕркисене тĕпчес тĕлĕшпе” программа ятне панă. Анчах та кун çинчен урăх калаçу. Мĕнрен пуçларăмăр-ха эпир? Географи кĕнекинчен-и? Çавăнпах вĕçлĕпĕр.

Т.И.Чибидина хăйĕн пуçарăвне ырласа пулăшакансене пурне те тав тăвать. “Татнефть-Нурлатнефтешырав” ООО геологи пайне, “Нурлатнефть” НГДУ УКК, Чулпанти метеостанцие, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн çĕр ĕç пайне, çĕр комитетне, сахăр заводĕнчи шефсем, охотовед патне кайсан та, ăна пур çĕрте те пулăшнă. Çакă тĕрĕс ĕнтĕ - ĕçĕ пурне те кирлĕ вĕт.

1999 çулта эпир Нурлат станцийĕ 90 çул тултарнине уявлăпăр, çакăн хыççăн çулталăкран - районăн 70 çулхи юбилейне. Мĕн каласан та çак датăсем питĕ паллă.

**...Тăван çĕршыва чăннипех юратас тесен ăна лайăх пĕлмелле. Тĕнче çинчен эсир сахал мар пĕлетĕр ĕнтĕ, çапах пирĕн çырма ăçта тата мĕнле юхнине, çывăхри вăрманта мĕнле йывăççем ӳснине, аслисем ăçта ĕçленине, пурнăç лайăхрах пултăр тесен мĕн тумаллине пĕлетĕр-и вара? Тăван тата çывăх тавралăха тĕпчени кашнине лайăх тата тăрăшса ĕçлеме, унăн ĕçĕ обществăна нумайрах усă кӳме кирлĕ...** ***(Пулас географи кĕнекинче шкул ачисене чĕнсе каланинчен).***

Т.НАЗАРОВА.

## Сцена çинче - учительсем

Август уйăхĕн юлашки кунĕсенчен пĕринче Çирĕклĕ ялĕн культура çуртĕнче халăх питĕ нумай пуçтаранннăччĕ: кунта ялти вăтам шкулта ĕçлекен учительсем отчетлă концерт кăтартрĕç. Видеоçыравра Çирĕклĕри вăтам шкул çуртне, садне, шкул çумĕнчи участока кăтартнă май чуна килентерекен кĕвĕ янăрать, вăл мана ачалăха, шкулта вĕреннĕ çулсене аса илтерчĕ. Кунтах эпĕ педагогика ĕçĕнче пĕрремĕш утăмсем турăм вĕт. Çав çулсем чылай кая юлнă ĕнтĕ, çавăнпа та вĕсем çинчен аса илни чĕрене питĕ çывăх тата хаклă.

Сцена çине учительсем пĕрин хыççăн тепри хăпараççĕ, вĕсен хушшинче эпĕ хамăн ĕçтешсене çеç мар, мана çырма, вулама вĕрентнĕ учительсене куратăп. Фарида Мухлисовна, Назима Вахитовна, Розалия Вагизовна, Резеда Бариевна, Наиля Гайнутдиновна - вĕсем маншăн яланах тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Йывăр вăхăт пулнине пăхмасăр, çамрăксем чылай, коллектив малалла ăнăçлă ĕçлет тата пурăнать. Рузалия Асхатовна, Аниса Касымовна, Зульфат Хамитович, Халим Равгатович, Зульфира Рашитовна та опытлă педагогсем пулса тăнă ĕнтĕ, ачасене çирĕп пĕлӳ парас тесе вĕсем вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Директор çумĕ Гульфания Мотыгуллована та ырă сăмахсене çеç тивĕçлĕ. Ырă кăмăллă та лăпкăскере ачасем кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те хисеплеççĕ. Залра юрă хыççăн юрă янăрĕ, шкул темипе сценкăсем кăтартрĕç. Шкул коллективне малашне те ĕçре ăнăçлăхсем çеç сунас килет, шкултан вара пирĕн республикăн тивĕçлĕ гражданĕсем çеç пулса тухчăр.

Л.ДАУТОВА,
Нурлат хулинчи учительница.

*Уяв юррисем*

## Ура сырса ларнă чух

Урлă кĕлет умĕнче -
*(кашни йĕркене 2-шер хут)*
*Хушса юрламалли*
*(кашни йĕрке хыççăн):*
Туяр-туяр тулă арпи,
Ай-хай иккен сĕлĕ арпи.
Ура сырса ларнă чух
Ик сар ача пычĕç те
Ик питĕмрен чуп турĕç -
Ик куçăмран вут тухрĕ.
- Атя уява, теейрĕç.
Атте-анне ямарĕ.
Атте-анне ячĕ те,
Пичче пушмак памарĕ.
Пичче пушмак пачĕ те,
Инке чăлха памарĕ.
Инке чăлха пачĕ те,
Аппа тутăр памарĕ.
Аппа тутăр паманнипе
Уява тухаймарăм.
Туяр-туяр тулă арпи,
Ай-хай иккен сĕлĕ арпи.

Пухса йĕркелекенĕ
Е.ИЛЮШКИНА.




# Саламлатпăр!

***Салтакъелĕнче пурăнакан юратнă мăшăра, аттене, кукаçее Евгений Матвеевич ВАСЮТКИНА 70 çул тултарнă ятпа чунчĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр.***

***Мăшăрĕ, ачисем, мăнукĕсем.***

**** Ну эсир, ачасем, тĕлĕнтеретĕр!***

## Сăвăсем тата... начальник пулас килни çинчен

Вăрах вăхăт хушши кăмăллах мар калаçу хыççăн, унта абонент пирĕн тивĕççене хирĕçлемелле мар пĕтĕмлетме тăрăшать (массăлла информаци Законне пăрахăçламан вĕт), пирĕн пата редакцие ытарайми ача килчĕ. Саккăрта, Артур ятлă. Хăйне еверлĕ тăхăннă, ку вара çанталăкпа килĕшсе тăратчĕ. Артур редакцие хăй пĕчченех тупнă. Хăй çырнă сăввисене илсе килнĕ. Кĕскен каласан, вĕсене сăвăсем теме те çук, анчах та унта ăслă шухăшсем çырнă. "Эсĕ чухăн е пуян пулсан та пурнăçа юрат" еверлĕ шухăшсем. Акă çапла. Артур 3-мĕш класа куçнă иккен, шкула кăмăлпах çÿрет, уйрăмах - математика, вырăс чĕлхи, тутар чĕлхи тата ОБЖ урокĕсем килĕшеççĕ, кĕскен каласан, ăна пурте килĕшет. Вăл "Эпĕ тĕнчене пĕлес тетĕп" кĕнеке вулама юратать, çапла пирĕн хаçата та тăтăшах вулать. Ăна унта çынсем çинчен çырни килĕшет.

Артур вăтанмасăр, уççăн калаçнипе редакцире ĕçлекен хĕрарăмсене тĕлĕнтерчĕ. Арçынсем, паллах, ăна ăмсанчĕç. Юлашкинчен вăл пире тата та тĕлĕнтерчĕ. Унран ÿссен кам пулатăн, тесе ыйтсан, Артур пĕр тăхтаса тăмасăр: "Начальник", - терĕ. Çав вăхăтра унăн илемлĕ те пысăк куçĕсем пĕрре те суймарĕç. Вăл тĕрĕсне каларĕ.

Пĕчĕк арçын ача начальниксем ыттисенчен лайăххах пурăннине тахçанах ăнланнă. Вĕсен ĕç укçи те пысăкрах. Килĕсене те машинапа леçсе хăвараççĕ. Вĕсен яваплăхĕ те пысăкрах пулни çинчен вара Артур халлĕхе шухăшламасть-ха. Вăл лайăххах кăна пурăнасшăн. Тивĕçлĕ ĕмĕт, тĕрĕс мар-и?

**Т.АЛЕКСЕЕВА.**

Редакцие шăнкăравлаççĕ

## Улталарĕç пулас

- Редакци, аван-и? Сирĕн пата II группăри инвалид Евгений Федорович Логинов шăнкăравлать. Эсир социаллă пурнăç темипе чылай заметкăсем çыратăр. Нумаях пулмасть пирĕн Пионерская, 40 лет Октября, Куйбышев тата Красноармейская урамĕсенчи - "Радуга" магазин патĕнчи блоклă пилĕк çурта - НГЧран МПП пачĕç. Апрель уйăхĕнчех НГЧ начальникĕсем çутçанталăк газĕпе çыхăнтарма тесе пиртен 33-шер тенкĕ (çĕннипе) пуçтарчĕç, çутçанталăк газĕпе çыхăнтарассишĕн тÿлессине кĕрет терĕç, эпир çĕр айĕнчи резервуарсенчипе усă куратпăр, час-часах газ та пулмасть. Çутçанталăк газĕпе çыхăнтарма шантарчĕç, анчах та çу иртрĕ, кĕркунне çитрĕ, ĕç вара халĕ те пĕр вырăнтан хускалмасть.

Çак çуртсенче пурăнакансенчен чылайăшĕ пенсионерсем, пире ертÿçĕсем патне "çитме" йывăр. Çавăнпа та пирĕн ыйту çине хаçат урлă хурав пама ыйтатпăр: "Пирĕн укçа ăçта кайнă? Мĕншĕн васкамаççĕ, шантарнине пурнăçламаççĕ?"

# Пĕлтерÿсем

### Сутатпăр:

*Дача участокĕ, 5,5 сотка (Хуралту). Телефон: 5-27-05.*

* * *

*1996 çулта туса кăларнă "Газель" (тентланă, газ-бензин). Телефон: 5-41-77.*

* * *

*Чÿрече, алăк блокĕсем, кирпĕч. Адрес: Космонавтсен урамĕ, 31а-2.*

* * *

*Циолковский урамĕнче 20-мĕш çурт, васкавлă.*

* * *

*ВАЗ-2105, сад пахчи. Телефон: 5-17-66.*

* * *

*Пианино. Телефон: 5-17-82.*

* * *

*Тихаллă 4 çулхи лаша. Вырăс Менчинчи Черновран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*ВАЗ-2108 валли кузов. Адрес: Красин урамĕ, 8.*

* * *

*Çÿрекен "Урал" мотоцикл (запас пайĕсемлĕх). Адрес: Заводская урамĕ, 2а-13.*

* * *

*3 çулхи турă лаша (кÿлме вĕрентнĕ) тата 1,4 çулхи тиха, васкавлă. Адрес: Мамăк ялĕ, телефон: 4-12-20.*

* * *

*"Москвич-412", хаклă мар. Телефон: 5-27-34.*

* * *

*ЖКХна хирĕç гараж. Адрес: Дружба урамĕ, 74-43.*

* * *

*Çĕнĕ мар стенка, хаклă мар. Адрес: Нефтяниксен урамĕ, 31-2, 17 сехет хыççăн пымалла.*

* * *

*Çурçĕр-Хĕвелтухăç микрорайонĕнче çурт валли участок. Телефон: 2-23-76.*

* * *

*Аксури вăрман хуçалăхĕ курттăмăн тата ваккăн касман чус-хăма, арболит блокĕсем, шатăрнак сутать.*

*Чÿрече тата алăк блокĕсем, вĕллесем тума заказсем йышăнатпăр.*

*Вăрман хуçалăхĕн транспорчĕпе леçсе пама пултаратпăр. Ыйтса пĕлмелли телефонсем: (8244) 2-14-32, 2-11-92.*

### Тĕрли:

*Сентябрĕн 3-мĕшĕнче Чишма поселокĕнче хĕрлĕ тĕслĕ ĕне çухалнă. Ун çинчен пĕлекенсене Асылгараевана пĕлтерме ыйтатпăр.*

* * *

*Лайăх сторительсем çинчен пĕлтеретĕп (тÿлевсĕр). Çуртсем, гаражсем, хушма çуртсем тăваççĕ (паха). Телефон: 5-16-25.*

* * *

*Нурлатри суту-илÿ базине 5 çулран кая мар стажлă тĕп бухгалтер васкавлă кирлĕ. Оклад 1200. Телефон: 5-43-50.*

# Пĕлтерÿсем

*Республикăри "Скинеф" вĕрентÿпе бизнес Центрĕ ЭВМ операторĕсене хатĕрлессипе иртекен курссене итлекенсем пухать. Адрес: Школьная урамĕ, "Йăла çурчĕ", 2-мĕш хут. Ыйтса пĕлмелли телефон: 5-37-51.*

* * *

## Хусанти бизнеспа управлени институчĕн Шунтал филиалĕ

**1998-99 вĕренÿ çулне студентсене экономика факультетне çак специальноçпа йышăнать:**

**- менеджмент (специализаци - экономика); куçăмсăр вĕренмелле. Срокĕсем:**

**- вăтам шкул пĕтернисен - 5 çул;**

**- аслă тата тулли мар аслă пĕлÿ туяннисен (вăтам специальноçть) бази çинче - 3 çул.**

**Института калаçу тата тестировани иртерсе вĕренме илеççĕ. Тÿлесе вĕренмелле. Документсене çак адреспа йышăнаççĕ: Самар облаçĕ, Шунтал станци, Л.Толстой урамĕ, 53. Телефон: 2-12-63.**

**Лицензи номерĕ 16-157, РФ аслă пĕлÿ Министерстви 1994 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче панă.**

### *Экспресс-центр*

***Çĕнĕ услугăсем сĕнет: ют çĕршывра туса кăларнă теле-видео аппаратурине юсасси.***

x x x

***Яланах сутлăхра - компьютерсемпе аксессуарсем, оргтехника, фототаварсем, электрооборудовани.***

x x x

***Компьютерсемпе оргтехникăна юсассинче услугăсем парать.***

x x x

***А4 форматлă ксерокопи хатĕрлесси.***

x x x

***Кашни кунах 8 сехетрен тытăнса 18 сехетчен ĕçлетпĕр (апат вăхăчĕ 13 сехетрен тытăнса 14 сехетчен). Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, "Йăла çурчĕ", 2-мĕш хут. Ыйтса пĕлмелли телефон: 5-37-51.***

## Районта пурăнакансене пĕлсе тăма!

**1998 çулхи августăн 7-мĕшĕнчен Республикăри туберкулеза хирĕçле диспансерти флюорограф ĕçлет. Мĕнпур халăхăн, 15 çултисенчен пуçласа, туберкулезăн малтанхи формисене тата ÿпкен ытти чирĕсене палăртма флюорографи тĕрĕслевне иртмелле.**

**Районти тĕп больница администрацийĕ.**

### Тара илетпĕр:

***Висĕ çынран тăракан çемье хватер. Пĕлтермелли адрес: Советская урамĕ, 137-12. Телефон: 65-0-40, нефтяниксен коммутаторĕ урлă.***

***М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.***

***Пирĕн патра кăна!***

*Сеанса пĕтĕмпех анонимлă иртеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тÿлевсĕр!*

*Сипленĕ кун, эрнекун, сентябрĕн 25, октябрĕн 9-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 14 сехетре çырăнтару тата калаçу иртеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.*

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере висĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленноçть, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 3501